Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнченпе тухать

24 (7878) № * Юн кун, 2011 ҫулхи ака (апрель) уйӑхӗн 6-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Сӑвӑм ҫӳллӗ шайра

*Районта ҫулленех обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх отраслӗнче ӗҫлекенсем хушшинче экономика ӑмӑртӑвӗ иртерессри ырӑ йӑлара. Ҫулталӑк хушши выльӑх-чӗрлӗх патӗнче тӑрӑшса вӑй хунӑ ӗҫченсемшӗн ӑна пӗтӗмлетесси – кӗтнӗ самант. Ҫак кӗрешӳре кашниех ҫӗнтерме тӑрӑшать.*

*Ял хуҫалӑх производствинчи пысӑк ӳсӗмсемшӗн пӗлтӗрхи ӗҫ кӑтартӑвӗсемпе ҫӗнтерӳҫӗ ятне Суворов ячӗпе хисепленекен ял хуҫалӑх производство кооперативӗн Ҫатракассинчи сӗт фермине ӗҫлекен Фаина Юрьевна Антоновӑпа (сӑн ӳкерчӗкре) Надежда Евгеньевна Журавлева тивӗҫрӗҫ. Маттур хӗрарӑмсем 2010 ҫулта хӑйсен ушкӑнӗнчи (44 пуҫ) кашни ӗнерен 6702-шер килограмм сӗт суса илнӗ.*

*Ф. Антоновӑна кӑҫал ӗҫри ӳлташӗпе пӗрле район администрацийӗн пуҫлӑхӗн йышӑнӑвӗпе ҫӗнтерӳҫӗ ятне парса ятарлӑ хӑюпа чысларӗҫ. Кунпа пӗрлех Фаина Юрьевна «2010 ҫулта ӗнесене машинӑпа сӑвас ӗҫри чи лайӑх оператор» ят илме тивӗҫ пулчӗ. Хастар хӗрарӑмсем пысӑк сӑвӑмпа пӗрлех 100 ӗне пуҫне 100 пӑру илнӗ, вӗсене 100 процент упраса хӑварнӑ.*

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Ӗҫре ырӑ тӗслӗх кӑтартакансем



## Ыр кӑмӑллӑхӑн чикки ҫук

Марафон

**«Ачалӑх ячӗпе, ачалӑхшӑн» ыр кӑмӑллӑх марафонӗ пыни пирки пӗлтерӗр ӗнтӗ. Районти чылай предприятисемпе организацисем, учреждениесем унта активлӑ хутшӑнаҫҫӗ. Уйрӑм ҫынсем те ҫук мар.**

Ҫакна ӑнланмалла та. Мӗншӗн тесен ыр кӑмӑллӑхӑн чикки ҫук. Чӑннипех те пулӑшу кирлисене, уйрӑмах ачасене май пур таран пулӑшни, вӗсем тӗлӗшпе тимлӗх уйӑрни паянхи ҫӑмӑл мар вӑхӑтра пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Ырӑ тума тӑрӑшакана вара яланах сӑвап пулнӑ.

Ҫак вӑхӑта районӗпе марафон ҫӳпҫине пӗтӗмпе 91 пин тенкӗ ытла укҫа пухӑннӑ ӗнтӗ. Вӑл шутран 75 пин тенкӗ ытла кассӑна укҫан хывнӑ, 16 пин тенкӗне яхӑн лицевой счет ҫине куҫарса панӑ. Пысӑк сумма куҫарма май тупнисем хушшинче районти тӗп больница (16150 тенкӗ), район администрацийӗ (15 тенкӗне яхӑн), РФ Пенси фончӗн районти управленийӗ (5160 тенкӗ), Хорнуй ял тӑрӑхӗн администрацийӗ (3831 тенкӗ), райадминистрацин вӗрентӳ, ҫамрӑксен политики тата физкультурӑпа спорт пайӗ (3250 тенкӗ), Ҫатракасси шкулӗ (3210 тенкӗ), Юнкӑ шкулӗ (3250 тенкӗ) тата ыт. те.

Сӑмах май мартӑн 17-мӗшӗ тӗлне пӗтӗм суммӑран 59110 тенкине «Раҫҫей ача-пӑча фончӗн» Чӑваш регион уйрӑмне куҫарнӑ.

**Хамӑр инф.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградӑланӑ

***Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн 2011 ҫулхи апрелӗн 1-мӗшӗнчи 266 № йышӑнӑвӗпе ҫаксене район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ:***

– вӗрентӳ сферинче тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн **Геннадий Иванович ИВАНОВА**, «Ҫатракассинчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкул» муниципаллӑ вӗрентӳ учрежденийӗн водительне;

– вырӑнти самоуправлени органӗсенче нумай ҫул хушши тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн **Галина Петровна ПАЛЕЕВӐНА**, Катькас ял тӑрӑхӗн администрацийӗн специалистне.

Районти больницӑра

## Черете – Интернетпа телефон пулӑшнипе

Информаци технологийӗсем хӑвӑрт аталанса пыни сывлӑх сыхлавӗ ҫине те витӗм кӳрет. Ҫак отрасльти модернизаци пӗр енӗ шӑпах информаци технологийӗсемпе ҫыхӑннӑ. Больницӑна пырас текен ҫын черетре тӑмасӑрах врач патне черете ҫырӑнма пултарать.

Ҫакӑн йышши электронлӑ регистратура учрежденийсенчи ӗҫ пахалӑхне те ӳстерет. Республикӑри сиплев учрежденийӗсен 33 процентне яхӑн электронлӑ регистратура йӗркеленӗ ӗнтӗ. Ҫӗнӗлӗхсене пурнӑҫа кӗртни ҫак цифрӑна, паллах, 100 процента ҫитерме тивӗҫ. Республикӑри сиплевпе профилактика учрежденийӗсен 77,1 процентӗнче телемедицина консультацийӗсене ӗҫе кӗртме палӑртаҫҫӗ. Пациентӑн электронлӑ картти, медицина учрежденийӗн электронлӑ паспорчӗ тата ытти хӑш-пӗр ҫӗнӗлӗхсем те ҫитес вӑхӑтра пурнӑҫа кӗмелле.

Муркашри тӗп больница та вӑхӑтпа тан пырать. Больницӑра электронлӑ регистратура ӗҫлеме тытӑнчӗ. Электронлӑ май кашни ҫыннах поликлиникӑн ӗҫ вӑхӑтне, специалистсен йышӑнӑвӗн вӑхӑтне пӗлме май парать. Ӗҫлекен ҫыншӑн электронлӑ регистратура пурри уйрӑмах меллӗ. Врач патне хӑш кун тата хӑш вӑхӑта ҫырӑнасси унран хӑйӗнчен килет. Электронлӑ регистратурӑна ҫак адреспа тупмалла: www.morgaushi-med.cap.ru. 62-3-37 номерпе шӑнкӑравласа та врач патне черете ҫырӑнма пултаратӑр.

**Муркашри тӗп больница администрацийӗ.**

Уйӑхлӑх

## Тавралӑх тасарах пултӑр

***Ҫурхи кунсем ҫитнӗ май ялсемпе урамсене, обществӑлла вырӑнсене, организацисемпе предприятисен территорийӗсене санитарипе экологи тӗлӗшӗнчен тасатса тирпейлес, тирпей-илем кӗртес, йывӑҫсем лартса симӗслентерес енӗпе районта уйӑхлӑх иртерме пӑхнӑ. Вӑл апрелӗн 6-мӗшӗнчен пуҫӑнса майӑн 8-мӗшӗччен пырать.***

Уйӑхлӑх вӑхӑтӗнче эрнесерен кирек епле харпӑрлӑх формиллӗ предприятисемпе организацисен те хӑйсен территорийӗсене тасатса тирпейлес енӗпе субботниксем йӗркелемелле.

Ял тӑрӑхӗсенче кунпа пӗрлех масарсен, асӑну вырӑнӗсен, парксемпе скверсен территорийӗсене тасатса тирпейлесе йӗркене кӗртӗҫ, йӑла каяшӗсене чавса чикнӗ вырӑнсене, шыв парса тӑракан башньӑсен ҫывӑхӗнчи территорисене тирпей-илем кӗртессипе ӗҫлӗҫ. Планпа пӑхнӑ тӗп ӗҫсемсӗр пуҫне ҫавӑн пекех нумай хваттерлӗ ҫуртсен картишӗсене, ача-пӑча площадкисене тасалӑхпа тирпейлӗх енӗпе кирлӗ шая ҫитерес пулать.

Ҫул хӗрринче вырнаҫнӑ сервис предприятийӗсен тата суту-илӳ объекчӗсен ертӳҫисен хӑйсен ҫывӑхӗнчи территорисене йӗркеллӗ пӑхса тӑмалла, кирлӗ пек тасатса ҫӳп-ҫапа тата ытти тасамарлӑха вӑхӑтра тиесе тухассине йӗркелемелле.

**Хамӑр инф.**

Видеоконференци

## Вырӑнти йӗркелӗхшӗн пуҫлӑх ответлӑ

Апрелӗн 4-мӗшӗнче ЧР Министрсен Кабинечӗн Председателӗ Олег Макаров муниципаллӑ пӗрлешӳсен пуҫлӑхӗсемпе видеоконференци ирттернӗ. Сӑмах ҫурхи ейӳ тапхӑрӗнче ҫынсен хӑрушсӑрлӑхне тивӗҫтерессри, чрезвычайлӑ лару-тӑрӑва асӑрхаттарасси пирки пынӑ. Конференцие ӗҫне ЧР Президент Администрацийӗн ертӳҫи Александр Иванов, республика граждански оборона тата чрезвычайлӑ лару-тӑру ӗҫӗсен патшалӑх комитечӗн председателӗ Юрий Кекиш хутшӑннӑ.

Олег Макаров палӑртнӑ тӑрӑх кӑҫал юр ытти ҫулсихенчен нумайрах. Ҫавна май ҫурхи тапхӑрта граждансен хӑрушсӑрлӑхне тивӗҫтерессипе пур мерӑсене те йышӑнас пулать. Кӑнтӑрла ҫантӑлӑк ӑшӑ, ир-каҫ шӑнтать. Ҫавна май нумай хутлӑ ҫуртсен ҫийӗсен хӗррисенче тумла пӑрӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Апла пулсан уйрӑмах асӑрханулӑ пулни кирлӗ. Вӗсене вӑхӑтра тасатмалла. Ку тӗлӗшпе Етӗрнере пулса иртнӗ инкек пиришӗн те урок пулса тӑмалла. Муниципалитет ертӳҫисен вырӑнсенче хӑйсен тӑтӑшах пулмалла, лару-тӑрӑва пӗлсе тӑмалла.

Александр Иванов территорисене, ҫулсен айккисене юртан тасатассине йӗркелемелли пирки асӑрхаттарнӑ. Шыв юхтарса кӑлармалли сооруженисене пӑхсах тӑрас пулать. Ял тӑрӑхӗсемпе ялсенчен тухма ҫулсем уҫӑ пулчӑр.

Юрий Кекиш хӑш-пӗр районсенче пӑр ҫийӗн касса ҫӳреме хывнӑ ҫулсем пуррине, пулӑҫсем пӑр ҫинче пухӑнса ларнӑ тӗслӗхсем пулнине палӑртнӑ. Ҫакӑ пӗтӗмпех ҫынсен пурнӑҫӗшӗн хӑрушлӑх кӑларса тӑратма пултарать. Ҫурхи хӑрушсӑрлӑх пирки ача-пӑчапа кӑна мар, вӗсен ашшӗ-амӑшӗпе те тӗплӗ инструктажсем ирттерес пулать. Муниципалитет территорийӗнче мӗн пулса иртнишӗн пӗтӗмпех вӗсен пуҫлӑхӗсем ответлӑ пулса тӑраҫҫӗ. Кун пирки Чӑваш Ен президенчӗ Михаил Игнатьев та пӗр хут кӑна мар асa илтернӗ.

**ЧР Президент Администрацийӗн пресс-службисӗ.**

Саламлатпӑр



Оринин ял тӑрӑхне кӗрекен Патаккассинче пурӑнакан хаклӑ ӗҫтешӗмӗре – **Галина Пантелеймоновна КОВАЛЕВӐНА** ҫуралнӑ кунӗ ячӗпе ҫирӗп сывлӑхпа вӑрӑм ӗмӗр, тулӑх пурнӑҫпа иксӗлми телей курса пурӑнма ырлӑх сунса ӑшшӑн саламлатпӑр.

Шкул пӗтернӗренпе чӗрӗк ӗмӗр ытла хуҫалӑхри ӗне ферминче вӑй хуракан ҫыннӑмӑр ҫак тапхӑрта ырӑ сӑмаха ҫеҫ тивӗҫни пире савӑнтарать. Хӑй ӗҫӗнчи чӑн ӑста ӳлташӗсене пулӑшма та яланах хатӗр. Юлашки ҫулсенче Галина Пантелеймоновна хӑй суйласа илнӗ профессипе хуҫалӑхра ҫеҫ мар, районта та, республикӑра та пӗрре мар ырӑ ята тивӗҫ пулчӗ. Кил-ҫурту санӑн тӑвансемпе юлташсенчен, сӗтелӳ ҫӑкӑр-тавартан, кӑмӑлу ҫемье юратӑвӗнчен тата ӗҫтешсен килӗштерӗвӗнчен ан таталтӑр.

**Саламлакансем: пӗрле ӗҫлекенсем.**

Юратнӑ анне – Муркаш салинче пурӑнакан **Маргарита Валентиновна САЗОНОВӐНА** 55 ҫулхи юбилей ячӗпе чун-чӗререн ӑшшӑн саламлатпӑр. Ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми телей сунатпӑр. Телейпе ӑнӑҫу яланах санпа пӗрле пулчӑр, ӗмӗтӳсем ҫитсе пычӑр. Татах та нумай ҫул пурӑнма Турри чир-чӗртен сыхлатӑр, телей парнелетӗр.

**Салампа: икӗ ывӑлӗ, хӗрӗпе кӗрӳшӗ, мӑнукӗ тата ҫывӑх тӑванӗсем.**



Ҫатракасси шкулӗнче ӗҫлекен **Геннадий Иванович ИВАНОВА** 60 ҫул тултарнӑ ятпа ӑшшӑн саламлатпӑр. Пурнӑҫ ҫулӗ вӑрӑм килтӗр. Телей нихӑҫан та ҫумӑнтан ан кайтӑр, сывлӑху ҫирӗп пултӑр. Кӗрекӳ яланах тӑвансемпе пуян пултӑр, телейпе ӑнӑҫу юнашар ҫӳречӗр, ӗмӗтӳсем ҫитсе пычӑр. Пурнӑҫунта пӗтӗм ыррине кӑна сунатпӑр.

**Саламлакансем: Ҫатракассинчи вӑтам шкул коллективӗ.**



Юратнӑ упӑшкана, аттене, маҫакана, пиччене, коллегӑна, вӗрентекене – Тивӗш ялӗнче пурӑнакан **Семен Федорович ФЕДОРОВА** 80 ҫул тултарнӑ ятпа чӗререн саламлатпӑр. 50 ҫула яхӑн шкулта ӗҫленӗ хушӑра темиҫе ӑрӑва тарӑн пӗлӳ, тӗрӗс воспитани парса пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларас тесе нумай тӑрӑшрӑн. Ҫурт лартрӑн, ывӑл ҫитӗнтертӗн, сад ӳстертӗн. Юбилей ячӗпе саламласа, сывлӑх та телей, вӑрӑм кун-ҫул сунса **мӑшӑрӗ, ывӑлӗпе кинӗ, мӑнукӗ, шӑллӗ, тӑванӗсем, пӗрле ӗҫленӗ юлташӗсем тата вӗренекенсем.**



Юратнӑ аннене, хисеплӗ асаннене – Нискасси ялӗнче пурӑнакан **Тамара Марковна ВОЛКОВӐНА** 75 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн тата ӑшшӑн саламлатпӑр. Яланах сывлӑхлӑ, хавас кӑмӑл-туйӑмлӑ пулмалла пултӑр, малашне те татах нумай ҫул пире савӑнтарса пурӑнма сана Турри пил патӑр. Хӑвӑн ватлӑх ҫулӗсене пахмасӑрах пире халӗ те пулӑшма тӑрӑшатӑн. Пуриншӗн те сана ҫӗре ҫити пуҫ тайса тав сӑмахӗ калатпӑр.

**Салампа: ывӑлӗсемпе кинӗсем, мӑнукӗсем, кӗҫӗн мӑнукӗ Карина.**

Пĕтĕм тĕнчери сывлăх кунĕ çитнĕ май: «Психотерапевт шухăшне пĕлесшĕнччĕ»

# Камсене кирлĕ медицинăпа социаллă пулăшу?

***Пĕтĕм чир нервран пуçланать тенине илтме хăнăхнă эпир. Пăшăрхантаракан тĕслĕхсем вара паян тупăнсах тăраççĕ. Пурнăçри пур тĕрĕсмарлăхах çемьене, ачасене пырса çапать. Çакă сывлăх çинче тӳрременех тарăн шăйрăк хăварать. Апла пулсан çыннăн сывлăхĕ мĕнле пуласси социаллă пурнăçпа экономика условийĕсенчен нумай килет. Çакă çынсен сывлăхне сыхлас ыйту çине те çĕнĕлле пăхма хистет. Çавăнпах сывлăха сыхлас ĕç учрежденийĕсенче медицинăпа социаллă пулăшу парасси те пурнăçа кĕме пуçларĕ. Тĕрĕсрех каласан ытти çулсенче те ĕçленĕ-ха медицина ĕçченĕсем ку ыйтупа. Кăçалтан пуçласа çак ĕç çине тата ытларах тимлĕх уйăрма пуçларĕç. Пирĕн районти тĕп больницăра та пациентсене çак пулăшăва парассине малти вырăна хураççĕ.***

***Камсене параççĕ медицинăпа социаллă пулăшăва? Ку ĕç мĕнле пулса пырать? Çакăн çинчен тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм эпĕ районти тĕп больницăн врач-психотерапевтĕнчен, наркологĕнчен Л.М. ИВАНОВĂРАН.***

–Тĕпрен илсен медицинăпа социаллă пулăшу медицина тĕлĕшĕнчен тата социаллă проблемăсем пур категорине кĕрекенсене кирлĕ. Урăхла каласан вăрах вăхăт хушши тата час-час чирлекен ачасене, пурнăçра хăйсене тупайманнисене, тăлăх ачасемпе нумай ачаллă çемьесене, инвалидсене т.ыт. те. Медицина ĕçченĕсене хăйсене кăна ĕçлеме çăмăлах мар вĕсемпе. Мĕншĕн тесен çак ушкăна кĕрекенсен вăл е ку ыйтăвне татса панă чух пĕр медицина тĕлĕшĕнчен паракан пулăшу кăна çителĕксĕр пулса тухать. Вĕсен социаллă ыйтусемпе те ĕçлемелле. Социаллă ĕçченсене те медицина ĕçченĕсемсĕр вăл ыйтусемпе ĕçлеме кансĕр. Мĕншĕн тесен вĕсен клиенчĕсем хушшинче психика тата ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчи аталану енчен медицина пулăшăвĕ кирлĕ çынсем час-час тĕл пулаççĕ.

**–Медицинăпа социаллă пулăшу панă чух мĕн енĕпе ытларах тимлеççĕ сывлăх хуралçисем?**

–Чи пĕрремĕш тивĕç, паллах, медицина пулăшăвĕ парасси. Çавăн пекех вĕсем çемьесенчи чирлĕ çынсене пăхаççĕ. Тĕрлĕ ушкăна кĕрекен ачасемпе çул çитмен çамрăксем патне килĕсене кайса çӳреççĕ. Çемьесенче пулса санитарипе гигиена тĕлĕшĕнчен профилактика калаçăвĕсем ирттереççĕ. Çавăн пекех вĕсем ачасемпе ашшĕ-амăшĕсене медицинăпа социаллă пулăшу илмелли правасемпе паллаштараççĕ, вĕсене памалли йĕрке çинчен ăнлантараççĕ.

Медицинăпа социаллă пулăшу парассине вара икĕ пая уйăрма пулать: профилактика тата патогенетика пайĕсем. Профилактика пайне мĕн кĕрет-ха? Социаллă лару-тăруран килекен чирсенчен асăрхаттарасси, çынсене сывă пурнăç йĕркипе пурăнас çула кăтартасси, сывлăха упрама вĕрентекен информаци илме пулăшасси, ачасемпе çул çитмен çамрăксен прависене сывлăха сыхлас ыйтусем тĕлĕшĕнчен хӳтĕлесси т.ыт. те. Патогенетика пайне вара медицина тата социаллă пулăшу парасси, ку енĕпе экспертизăсем тăвасси, инвалидсене медицина тĕлĕшĕнчен, социаллă, профессиллĕ шайра реабилитацилесси т.ыт. те кĕрет.

**– Лариса Меркурьевна, çыннăн сывлăхĕ мĕнле пуласси, вăл хăйне пурнăçра çирĕп туясси пирĕн йĕри-таврари пурнăç условийĕсенчен нумай килет терĕмĕр. Мĕн пĕлмелле-ха пирĕн хамăра, ашшĕ-амăшĕсене, килсе çапнă шăпа ачасене пырса ан çиттĕр тесен? Ачасене хамăртан телейлĕрех, сывлăхлăрах пултарас килет-çке.**

– Ачан пурнăçĕ йĕркеллĕ пуласси ача амăшĕпе ачасем валли тивĕçлĕ условисем туса хунинчен нумай килет. Шăпах ача пурнăçĕн аталанăвĕн малтанхи тапхăрĕ мĕнле иртнинчен килет ача сывлăхĕ мĕн ĕмĕр тăршшĕпех мĕнле шайра пуласси. Практика çакна кăтартса парать: çитĕннĕ çыннăн сывлăх шайĕн никĕсĕ вăл амăшĕн хырăмĕнче тата кĕçĕн çулсенче чух йĕркеленет. Ача пĕчĕк чух ăна аталанмалли условисем кирлĕ пек пулманни, çавна пула вăл хăйĕн ӳсĕмне кура кирлĕ пек аталанайманни çыннăн организмăн биологи тĕлĕшĕнчи пуянлăх çине япăх витĕм кӳрет. Çапла вара сывлăхшăн ĕмĕр тăршшĕпех кирлĕ никĕсе хавшатса хăварать.

Амăшĕн варĕнчи ачан сывлăхĕшĕн вара амăшĕ кирлĕ таран тата витаминсемпе пуян апат çименни, амăшĕ йывăр çын чухне стрессене чăтса ирттерни, вăл пирус туртни, эрех ĕçни питĕ пысăк хăрушлăх кăларса тăрататççĕ. Çаксем йăлтах ачан сывлăхне ĕмĕрлĕх хуçса хăварма пултараççĕ, ӳт-пӳ аталанăвĕ енчен те, интеллект енчен те.

Ашшĕ-амăшĕсем ачисене пулăшу кирлĕ чух тимлесе çитерейменни вара çакăн пек çитменлĕхсем патне илсе пырать: ача шкула кайма кирлĕ пек хатĕрленсе çитеймест, вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайми пулать, хăйне тыткаласзинче те проблемăсем тĕл пулма пуçлаççĕ. Çитĕнсе çитсен те кун пек ача хăйне ыттисенчен «катăк» туйма пултарать.

Кирлĕ пек апатланни, физкультурăпа туслă пулни, пирус туртманни вара сывлăхшăн питĕ усăллă. Çак паха енсене ачасене ашшĕ-амăшĕн хăйсен тĕслĕхĕпе кăтартса памалла. Юлташĕсем çакăн пек пурнăç йĕркипе пурăнни те ачасем çине ырă витĕм кӳрет. Çавăн пекех вĕрентӳпе воспитани ача мĕнле çын пулса ӳсессинче пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Çакна та каласа хăварасах килет. Кăкăр ачи хăйĕн ӳсĕмне кура аталанайманни чĕрепе юн тымарĕсен тата сывлав системи, хырăмай парĕ тата пӳре кирлĕ пек аталанса ĕçлейменнипе çыхăннă. Ку вара ача çитĕннĕçемĕн тата ӳссе çитсен те тĕрлĕ чирпе чирлесси патне илсе пырать.

Çакăн пек хăрушлăх çити-çитми пурнăçпа пурăнакан çемьесенчи ачасене ытларах пырса тивет. Лару-тăрăва лайăх енне улăштарма пулать: пĕрремĕш хут ача амăшĕ пулма хатĕрленекенсемпе, ача амăшĕсемпе тата ачасемпе хĕрарăмсен консультацийĕнче, ачапăча уйрăмĕнче профилактика калаçăвĕсене ирттермелле. Амбулаторипе поликлиника учрежденийĕсенче медицинăпа социаллă пулăшусем парассине пысăк тимлĕх уйăрни вара шăпах профилактика тата сиплев ĕçне лайăхлатма май парать.

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

# Çар часĕсем сире кĕтеççĕ

Яшсем валли

Çарта службăра пуласси кашни яшăн таса тивĕçĕ шутланать. ЧР Çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи пайĕ çул çитнĕ çамрăксене çар ретне ăсатнипе пĕрлех контрактпа службăна каяс текен кандидатсене хатĕрлессипе те ĕçлет.

Кандидатсене чи малтанах Тĕп çар округĕнчи тата Таджикистан Республикин территорийĕнчи 201-мĕш çар базин часĕсене ăсатаççĕ.

Казарма общежитийĕсенче пурăнмалла пулать. Çемьеллисене служба хваттерĕсемпе тивĕçтереççĕ. Тĕп çар округĕнче уйăхсерен 10 пин тенкĕ ытла, 201-мĕш çар базинче 18 пин тенкĕ таран тӳлеççĕ. Кунсăр пуçне тата кварталта преми парассине, пĕр хут укçан тӳлессине, пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшассине т. ыт. те пăхса хунă.

Контрактпа службăна каяс текен кандидатсем «С», «Д», «Е» категорисемлĕ водительсем пулмалла, ĕç стажĕ 1 çулталăкран кая мар кирлĕ, сывлăхĕсем тивĕçтермелле.

Водитель удостоверенийĕ çуккисем ытти çар специальноçĕсемпе 201-мĕш çар базинче Таджикистанри Душанбе хулинче служба тивĕçне пурнăçлама пултараççĕ.

Пĕр уйăх службăра пулни 1,5 уйăх шутне кĕрет. Çакă пулас пенси виçипе тӳрремĕнех çыхăннă.

Ытти вăй министерствисен (ВВ МВД РФ, МЧС, ПС ФСБ) часĕсем валли те кандидатсем суйласа илеççĕ. Требованисем: 35 çултан аслă пулмалла мар, «С», «Д», «Е» категориллĕ водитель удостоверенийĕ кирлĕ, сывлăх шайĕ тивĕçтермелле, судпа айăпланнисене илмеççĕ.

РФ Оборона министерствин вĕренӳ çар заведенийĕсенче сержантсемпе старшинасен должноçĕсем валли те специалистсем хатĕрлеççĕ. Çавна валли кандидатсем пухасси 2011 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕччен пырать. 2 çул та 10 уйăх вĕренмелле, тӳлевсĕр 3 хут çитереççĕ, пурăнмалли вырăнпа тивĕçтереççĕ, тумлантараççĕ, уйăхне 8–15 пин тенкĕ стипенди тӳлеççĕ.

Кандидатсен 24 çултан аслă пулмалла мар, 11 класран кая мар вĕренни кирлĕ, ЕГЭ тытнине пăхаççĕ, сывлăх шайне тĕрĕслеççĕ. Вĕренсе тухсан вăтам професси пĕлĕвĕ илни çинчен диплом параççĕ.

Хальхи вăхăтра контракт çырма 5 çынна ăсатнă, 2 кандидата вĕренме яма суйласа илнĕ. Хăвăра интереслентерекен ыйтусемпе Çар комиссариачĕн пайне пырас пулать, (8-835-41) 62-1-89, 62-7-01 телефонсемпе çыхăнмалла.

**В. АНДРЕЕВ,**
**ЧР Çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи пай пуçлăхĕ.**

Аукцион

**Администрация Моргаушского района Чувашской Республики извещает о проведении открытого аукциона**

Форма торгов – открытый аукцион.

Наименование аукциона – открытый аукцион на право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района, подлежащего приватизации в 2011 году.

Основание проведения аукциона – постановление Администрации Моргаушского района Чувашской Республики № 274 от 01.04.2011 года «Об условиях приватизации муниципального имущества Моргаушского района»

Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: http://gov.cap.ru/main/asp?govid=71.

Контактные лица: Петров А.В., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66, Уткин Э.Г., ведущий специалист-эксперт отдела, тел.: 62-5-99

Предмет аукциона: право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района, подлежащего приватизации в 2011 году.

Начальная (стартовая аукционная) цена: начальная (стартовая аукционная) цена муниципального имущества определяется на основании отчета об оценке, выполненного независимым оценщиком.

Перечень муниципального имущества Моргаушского района подлежащего приватизации в 2011 году, с одновременной приватизацией земельного участка, на котором оно расположено: Лот №1: Административное помещение – помещение №1, расположенное на цокольном этаже жилого кирпичного здания (Лит.А), находящееся по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Заводская, дом 15, Литер: А; общая площадь помещения – 166,4 кв.м., инвентарный номер БТИ-1445.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеется

Технические условия подключения к инженерным коммуникациям – в соответствии с техническим заданием на эксплуатацию жилого здания.

Стоимость подключения к сетям инженерно-технического обеспечения определяется по фактическим ценам на дату подключения.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка – 269220 (двести шестьдесят девять тысяч двести двадцать) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

Сроки предоставления заявок: с 06 апреля 2011 года по 06 мая 2011 года.

Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – Администрация Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123000012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810775140000005 в Чувашском ОСБ №8613 г. Чебоксары, кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа: задаток на участие в аукционе по продаже объекта муниципального имущества 12.05.2011.

Для участия в аукционе претенденты представляют следующие документы:

заявку; платежный документ с отметкой банка об исполнении, подтверждающий внесение соответствующих денежных средств. Физические лица предъявляют документ, удостоверяющий личность. Юридические лица дополнительно представляют следующие документы: нотариально заверенные копии учредительных документов; решение в письменной форме соответствующего органа управления о приобретении имущества (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент); сведения о доле Российской Федерации, субъекта Российской Федерации, муниципального образования в уставном капитале юридического лица; опись представленных документов. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется надлежащим образом оформленная доверенность.

Определение участников аукциона состоится 10 мая 2011 года по месту нахождения организатора конкурса: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, малый зал заседаний, 3 этаж. Время проведения открытого аукциона 12 мая 2011 года (по московскому времени): Лот №1- 10.00.

По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора купли-продажи муниципального имущества. Договор купли-продажи муниципального имущества заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола. Победителем аукциона признается лицо, предложившее наибольшую цену.

Пенси ыйтăвĕсемпе

# Эсир пĕлесшĕнччĕ...

***Яланхи пекех пирĕн почтăра пенси ыйтăвĕсемпе тĕрлĕрен ыйтусем сахал мар. Вĕсенчен хăшĕсем çине РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн специалисчĕсене хуравлама ыйтрăмăр.***

**– Ĕçлекен пенсионер вилсе кайрĕ пулсан ăна пытарма каякан тăкаксемшĕн пособие вăл ĕçленĕ вырăнтан тӳлеççĕ тенине илтнĕччĕ. Ăнлантарса парăр-ха, ĕçлемен пенсионер вилсен пособие кам тӳлет тата мĕнле документсем тăратмалла пулать?**

– Ĕçлемен пенсионера пытарма каякан тăкаксемшĕн социаллă пособипе Пенси фончĕ саплаштарать. Вилнĕ çынна пытарассине хăйсем çине илнĕ граждансен пенсионер вилнĕ хыççăн 6 уйăх хушшинче пенси илсе тăнă вырăнти РФ Пенси фончĕн управленине пымалла. Çумра паспорт, пенсионер вилни çинчен ЗАГС пайĕнче панă справка, вилни çинчен панă свидетельство, çавăн пекех вилнĕ кун тĕлне пенсионер ниçта та ĕçлеменнине çирĕплетекен документ (сăмахран, юлашки ĕç вырăнĕнче ĕçлеме пăрахни пирки çырса хунă ĕç кĕнеки) пулмалла.

2011 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса çынна пытарма паракан социаллă пособин чи пысăк виçи 4260 тенкĕпе танлашать.

Налуксем

# Интернет çĕнĕ майсем уçать

Хăвăрт улшăнать паянхи пурнăç. Интернет мелĕсем пурнăçа кĕрсе пынă май предприятисемпе уйрăм çынсем валли налук оранĕсемпе çыхăнса ĕçлеме çĕнĕ майсем уçăлаççĕ. Ятарлă çыхăну операторĕсем сĕнекен технологисем талăк тăршшĕпех тата канмалли кунсенче те ФНС, ПФР, Росстат тата ФСС енĕпе отчетсене ярса пама майсем туса параççĕ. Ку информацисен хӳтлĕхне тивĕçтерессине те пăхса хунă.

Налук тата бухгалтери отчетлăхĕн пур формисем те автоматлă режимпа çĕнелсе тăраççĕ.

Отчетсене Интернет урлă тăратнă чухне йăнăшсем пуласзинчен асăрханма май пур. Калăпăр сире налук органĕ çирĕплетнĕ деклараци кирлĕ пулсан налук инспекцийĕн ĕçченĕсем ăна çийĕнчех пичетлесе ун çине паллă туса парĕç.

Ятарлă çыхăну операторĕсемпе килĕшӳ тунă налук тӳлекенсен ытти услугăсемпе те усă курма май пур: ИОН-online тата ИОН-offline, ЕГРЮЛ тата ЕГРИП выпискисене илесси.

ИОН-online тата ИОН-offline çыхăнăвĕ çак документсене илме май парать:

– налукпа ытти тӳлевсен тĕрĕслев акчĕсене;

– налук тӳлевĕн расчет справкисене;

– бюджет расчечĕн операцийĕсен выпискисене;

– отчетлă тапхăрта тăратнă налук тата бухгалтери отчечĕсен переченне;

– налуксемпе пенисене тата налук санкцийĕсене пурнăçланин справкисене.

«Online» режимĕпе усă курни «offline» режимĕпе усă курнинчен информаци услугисене хальхи вăхăтпа илсе тăма пултарнипе уйрăлса тăрать. Налук тӳлекен кирлĕ информаци пирки хурава пĕр ĕç кунĕ вăхăтĕнчех илме пултарать.

Енчен те сирĕн отчетсене телекоммуникаци каналĕсем урлă тăратма май çук пулсан Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕ отчетсене тăратассине «Налогоплательщик ЮЛ» программăпа йĕркелеме сĕнет. Кайран вара ăна дискета, диск е флеш-карта çине çырса илсе централизациленĕ çыхăну операторĕсен консультаци пункчĕсем урлă ярса памалла.

«Налогоплательщик ЮЛ» программăна Федераллă налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕн сайтĕнчен илме пулать. Адресĕ: www.21/nalog.ru. Вăл «Помощь налогоплательщику» пайри «Программные средства» уйрăмра вырнаçнă.

Тĕрĕслевпе касса техникипе усă курас тĕлĕшпе йышăннă законодательствăна тĕрĕслес тĕллевпе налук инспекцийĕ çынсенчен касса чекĕсене пухассине йĕркеленĕ. Çавна май инспекцин Муркашпа Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи уйрăмĕсенче ятарлă ещĕксем вырнаçтарнă. Çавна май сире тĕрĕслевпе касса чекĕсене пăрахма хушмастпăр. Вĕсене налук органне пырса ещĕке ярса хăварăр. Чек тепĕр енне ăна панă организаци е предприниматель ăçта вырнаçнине паллă тăвăр.

**Л. МИХАЙЛОВА,**
**налук инспекцийĕн ертӳçин çумĕ.**

# Пĕрлехи ĕçпе йывăрлăхсене çĕнсе



## Фермăри хĕл кунĕсем

***Сарайсене çеç мар, выльăхсене хăйсене те хĕле хатĕрлемелли шухăша асра тытса «Ударник» федераллă патшалăх унитарлă предприяти ĕçченĕсем пĕлтĕр çулларан пуçласах хĕл кунĕсене çанă таврăнса хатĕрленчĕç. Йывăрлăх нумай, анчах вĕсене пĕрлехи ĕçпе, ыранхи куна шанса вăй хунипе çĕнме май пуррине те Йӳçкассисемпе Вăрманкассисем манмаççĕ. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем паян епле хĕл каçнипе интересленсе иртнĕ кунсенче асăннă хуçалăхăн ĕне фермисенче пулса куртăмăр.***



– Хĕл перекетлĕх ыйтать, – пĕтĕмлетрĕ фермăсем тăрăх иртнĕ май хăйĕн калаçăвне район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ Т.А. Алексеева.

Фермăра ĕçлекенсемпе тата вырăнти специалистсемпе иртнернĕ пирĕн калаçу выльăхсене хĕл кунĕсенче апатпа тивĕçтересси тата продукци илессине ӳстерессине тавра пулчĕ. Çанталăк ăшăтрĕ, çуркунне çитрĕ тенипех выльăх-чĕрлĕх валли апат-çимĕç килмест.

– Юр ирĕлме пуçларĕ пулин те выльăх пăхакансен ответлă тапхăрĕ вĕçленмен-ха. Унăн яваплăхĕ çав-çавах малти вырăнта. Çакна пирĕн ĕçченсем ăнланаççĕ. Выльăх апачĕ тĕлĕшпе иртсе пыракан хĕл кунĕсем питех те йывăр пулнăран вĕсенчен кашниех выльăх апатне перекетлесси пирки шухăшлать. Продуктивлăха ӳстерме урăхла çул çук, – терĕ пире Йӳçкассинчи ĕне ферминчи сĕт сивĕтмелли оборудовани патне илсе кĕнĕ май ферма заведующийĕ А. Петров **(сăн ӳкерчĕкре)**. Хăй ĕçне пĕлекен тата ответлăха туякан специалист вăл. 2-мĕш çул Йӳçкассинчи сĕт фермин коллективне ертсе пыракан Андриан Валерианович Петров кăçал иртнĕ çулхи ăмăрту условийĕсемпе килĕшӳллĕн «2010 çулхи чи лайăх ферма заведующийĕ» ята тивĕçрĕ. Вăл ертсе пыракан фермăра выльăхсене апатлантарас тата пăхас çĕрте малта пыракан технологисемпе анлă усă курса пĕтĕмĕшле сĕт сăвассине пĕлтĕр 18,8 процент ӳстернĕ. Фермипе пĕр ĕне пуçне 4093 килограмм сĕт суса пĕтĕмĕшле кăтартăва 1234,9 тоннăна çитернĕ. Кунта самăртма тăратнă выльăхсем те талăксерен вăтамран 660 грамм ӳт хушса 6,2 тонна аш панă.

Эпир ферма заведующийĕпе калаçса илнĕ хушăра район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ Т.А. Алексеева ферма ĕçченĕсемпе ăнлантару-вĕрентӳ калаçăвĕ ирттерме те ĕлкĕрчĕ.

– Районтан килсе пире шута хуни, фермăра ĕçлекенсемпе тĕл пулусем ирттерсе паянхи пĕтĕмĕшле лару-тăрупа паллаштарни ферма ĕçченĕсене кун уттипе тан пыма пулăшать. Ку вара çĕнĕ ӳсĕмсем патне пымалли сукмак, – ĕç вырăнне тирпейленĕ май калаçать Вăрманкассинчи ĕне ферминче 2-мĕш çул ĕçлекен Н. Семенова ĕне сăвакан. Вĕсем пĕрле ĕçлекен В. Димитриевăпа иккĕшĕ кăçалхи пĕрремĕш кварталта хăйсен ушкăнĕнчи кашни ĕнерен 1012 килограмм сĕт сума пултарнă. Ку вăл хуçалăхри лайăх кăтартусенчен пĕри.

– Хуçалăх ертӳçисем обществăлла выльăх-чĕрлĕхе апатпа тивĕçтерессипе çителĕклĕ ĕçлеççĕ теес килет. Çĕршер тонна апат туянчĕç ку хĕл кунĕсенче. Вĕсен тăрăшулăхне кура перекетлĕ пулса пирĕн те тухăçлăрах ĕçлемелле тесе шутлатпăр, – калаçăва хутшăнчĕ Н. Семенова.

Наталья Николаевна сăмахне район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕнчи кăтартусемпе пăхатпăр та тăрăшулăх яр уççăн куç умне тухать. «Ударник» хуçалăх кĕркуннерен пуçласа 85 тонна утă, 252 тонна улăм, 361 тонна сенаж, 728 тонна силос, выльăхсем валли 230 тонна фуражлăх тырă туяннă. Ку ĕç паян та чарăнман-ха.

– Выльăхсене тулăх апатлантарма тăрăшнипе пĕрлех вĕсене вăхăтра усă сывлăша кăларассине те кун йĕркинчен кăлармастпăр, – тет «Ударник» хуçалăхăн тĕп ветврачĕ, Йӳçкассинчи ветеринари участокĕн заведующийĕ Людмила Петровна Платонова. Йӳçкассинчи ĕне фермине çитсе пынă чух сенаж яминче ĕçлекен механизаторсем патĕнче чарăнтăмăр. **Сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла:** Йӳçкассинчи сĕт ферминче 20 çул сĕт оборудованийĕн операторĕ пулса вăй хуракан Андрей Абрамов, ашшĕн ĕçне малалла тăсса механизаторта вăй хуракан Владислав Алексеев, çур ĕмĕр хуçалăхра водительте ĕçлекен Петр Грачев, 47 çул ĕç стажлĕ водитель Виталий Семенов, специалистсене турттаракан Александр Анисимов водитель.

– Сарайсенче ĕçлекенсене хамăр енчен мĕн пулăшмаллине йăлтах вăхăтра пурнăçлама тăрăшатпăр, – терĕ кĕске калаçура П. Грачев.

Хуçалăх ĕçĕнче пуян опыт пухнă Петр Ивановича хирĕçлеместĕп. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче пĕрле ĕçлесен çеç малашлăх чиккисем уçăмланаççĕ. Çакна «Ударник» хуçалăхри фермăра вăй хуракан кашни ĕçчен туять. Ку çулпах аталансан кăçал та пĕтĕмĕшле кăтартусем пĕлтĕрхинчен кая пулмасса шанма пулать.

Иртнĕ çулхи шăрăх çу кунĕсене пула апат çителĕксĕрри малти вырăнта тăнăран мăйракаллă шултра выльăхсене самăртассипе те татса паман ыйтусем пурха. Анчах хуçалăх апат туянассипе тимлесех ĕçленĕрен кунти йывăрлăхсене те Йӳçкассисемпе Вăрманкассисем, Матьăксемпе Хурăнкассисем çĕнтерессе ĕненес килет. Хуçалăхра çитменлĕхсене маларах курни ĕçре тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳсем туса производствăна ӳсĕм шайĕнче сыхласа хăварма пулăшасса шанатăп.

**А. БЕЛОВ.**

# Сцена çинче ял артисчĕсем

## Ял пурнăçĕ

Ялти Культура çуртĕнче черетлĕ мероприяти тесен чун темĕн çĕннинех сисмерĕ-ха. Анчах хамăр ялти артистсемех «Сăпка юрри» спектакль премьерипе ял сцени çине тухаççĕ тени илĕртрĕ. Билет хакĕ те 20 тенкĕ кăна. Ĕç кунĕ хыççăн кайса килме юрать тесе çемйипех ял артисчĕсен ĕçĕпе паллашма кайрăмăр. Малтанхи çăмăл шухăша паянччене сивлетĕп. Спектакль премьерипе паллашнă хыççăн манăн унти рольсенче ăста вылякан ялти хастарсене чăваш халăх ял артисчĕсем тесе хаклас шухăш çуралчĕ. Кăна çак каç куракансен залне йышлă пухăннă çынсем те (кунашкалли тĕрĕссипе тахçанах пулманччĕ) кашниех мана майлă йышăнчĕ пулĕ. Сцена çинче больницăри ача çуратмалли уйрăмра пулса иртекен ĕçе нумайăшĕ алăран сăмса тутри ямасăр куççуль витĕр пăхса ларчĕ.

